Тĕштырăсене авăртса йĕ вĕтетсе çеç выльăхсене çитермелеç. Выльăх апачĕсене авăртас çĕрте армансем пысăк выртăç. Ăнăçлăхпа ăнăçсăрлăх комиссариатне ларнă халăх тăшманĕсем арман хуçалăхĕсене йăхăнтарса пынă. Хăвăрăйĕтăвкомсен тата колхозсен арман хуçалăхĕсене йĕркене кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлемелеç.

Йăлашкинчен сăкна та каласа хăварас пулать. Йăлхуçалăх снабженни склачĕсене уйăм тырăмели çĕршĕр машинăсем çуталăкĕнче выртаççĕ. Йăлхуçалăх снабженни çав машинăсене колхозсене сутма тăрăшас пулать.

Зоотехник П. Йĕлкин.

Районри выльăх-чĕрлĕх выставки

Нойабĕр уйăхĕнче Тăвайри районри выльăх-чĕрлĕх выставки пулса иртрĕ. Выставкăна сакăр колхоз хутшăннă.

Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕнĕпне пысăк çитĕнӳсем тунă. Лачкассинчи „Çăлтăр" колхоз выльăхсен ăратăлăхне лайăхлатса,вĕсенчен ытларах тупăш илессишĕн тăрăшса ĕçленине палăртса хăвармала. Сĕт-çу ферминчи ĕнесем сĕт ытларах пама тытăнăç. „Сорăнкă" ăратăлă ĕнне кăçал кăна пăруланă пулсан та, сакăр уйăх хушшинче 1826 литр сĕт панă. Пăрусене лайăх пăхса усранине вĕсем аван çитĕнеççĕ. „Сынок" ăратăлă пăру талăкра 1150 грам, „Герой" ăратăлă пăру 1050 грам хутшăса пырăççĕ.

Ферма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствăна планне ытлашшинех тултарнă. Кăçал фермăри сăвакан 78 ĕнене ăратăлă вăкăрсемпе чуптарса хăварнă.

Нăрваш Кушкăри „Искра ильич" колхоз выстăвкăна сурăхсем тăратнă. Колхозăн ферминче 267 сурăх, 12 тăка шутланать. Кăçал сурăхсенчен сакăршăр килограм çăм касса илнĕ. 100 сурăх выльăмалăх çĕнĕрен вите лартнă.

Тĕмĕр колхозăн чи лайăх ăратăлă йăăрне выстăвкăна тăратнă. Ку йăăрпа кăçал 32 кĕçĕр чуптарса хăварнă.

Выстăвкăна хутшăнă колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене хăй кăсарма тĕлĕн хатĕрленнĕ. Вĕсене райĕсрĕç панĕ премиксем панă.

В. Йăйни.

Ферман çулталăкри тупăшĕ

Уйăс Йăнтăпари (Трак р.) „Çĕнĕ пурнăç" колхозăн тавăрăл сĕтçу ферми кăçал 15.050 тенкĕ тупăш панă.

Колхоз государствăна аш-какай тата сĕт-çу тăратмали обйăзательстăна ытлашшипех тултарнă.

С. Т-р.

Вăйлă тырпулшăн ăмăртаççĕ

Аманикри (Куславкка р.) „Динамо" колхоз кăçалхи йăлхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 15,8 центнер тĕштырпа туса илнĕ. Хăй 1938 çулхи тупăшсене ĕçкуçессем тăрăх валеçсе памалла тытăнăç.

Колхозра стахановецсен йышĕ чылайăх çӳрĕ. А. Волкăв, И. Сĕвортцова, А. Мăçăников йăлташсем колхозра ни палла стахановецсем, вăйлă тырпул мăстăрĕсем пулса тăчĕç.

„Динамо" колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве анлă пуçарса пырать. Бригадăсем çуракине кăтартулăн хатĕрленес тĕлĕшне ăмăртăва тухрĕç.

Вăрăлăх тата страховой фондсене туса çитерне. Вăрăлăхсене пĕтĕмпех сурт-лараса тасатна. Йăлхуçалăх машинăсене те йăсаса, сапăрĕсене выпрăнтарса хатĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем çĕрпе çемçетмели выраннă йăлапасене ытлаях хатĕрлес тĕлĕшне тăрăшса ĕçлеççĕ.

К. Шенйе.

Ăсăна тăрăшăр

Çăкăн çинчен асра тытас пулать,—тенĕ Молотăв йăлташ 1938 çулхи нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче,—капиталисмăла ĕçлиттăрăлăх пур чухне, капиталисмăн тĕнчери пĕрлешмĕш совет государствине хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ йăвашланмасть, сӳнсе пымасть, йăлтах урăхла—вăл кĕрешӳ ӳссе, сивĕчленсе пырать, ытларан ытларах çивчĕ, ăна йăлашки средстăвсем çине тĕрĕнсе пырать. Çавăнпа та хамăр государствăн оборона хăватне тĕреклетес тĕлĕшне, хамăрăн пĕлӳлĕхе тата калас пулсан, класс тăшманне хирĕç, тăшманла капиталисмăла йĕриставраллăха хирĕç, кĕрешмели искусствăна ӳстерес тĕлĕшне, хамăр государствăпа аппаратăн пĕтĕм тата пур тĕрлĕ çитменлĕхĕсене, çав задачăна пурнăçа кĕртме чăрмантаракан çитменлĕхсене çĕнтерсе тухас тĕлĕшне пирĕн тата ытларах çине тăрса ĕçлес пулать.

Сталин йăлташ епĕр капитализăмлă йĕриставраллăх çинче мĕнле пăхни çинчен кăтартса панисене ăнланса илсе пурнăçа кĕртес тени вăл,—хамăран пĕтĕм тĕслĕ класс тăшманĕсене хирĕçле кĕрешӳ позицийĕсене тĕреклетессине пĕлтерет, ĕçе социализăм татăкланах çĕнтересси патнеле илсе пыраççине пĕлтерет".

Аслă Сталинла Конституци икĕ çул тултарнине Совет Союзĕ хăйĕн творчествăлă вăйĕсем чечекленсе кайнă вăхăтра кĕтсе илет.

Марксизăм-ленинизăмăн аслă йăлавĕ айĕнче, Ленин—Сталин партийĕ генине йĕртсе пынипе, Сталин йăлташ йĕртсе пынипе СССР Совăтĕ государственăн çулпуçĕ Сталин йăлташ йĕртсе пынипе епĕр ССР Союзĕнче тата пĕтĕм тĕнчере çĕнĕ, коммунизăмлă обшăстăва тăвăпăр.

Резинăран йăпаласем тăвакан Шупашкарти савăт стронтĕлствинче. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧĔ: Севастьянăва йăлташ йĕртсе пыракан хĕрарăмсен бригади. Çирĕм улттă çын валăри пана заданине бригадăри улттă çын ĕçлесе тултарнăçĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Йăл куļтурлансах пырать

Шуркасси йăлĕ (Ишлей р.) пĕчĕк йăл. Ку йăлта 30 кил кăна. Ĕлĕкхи вăхăтра кунта йĕркеренех чухăн киле-çуртсем ларнă. Çак чухăн килсенче пурăнакан çынсем сакăр çулхи ачасеннен пуçласах чĕрĕ, шăршлă, таса мар чăпта ĕçне ĕçлесе хăйсен сывлăхне пĕтернĕ, Корытниковпа Костин хуçасене пуйтарнă. Ӳнчухне йăлта хутла пĕлекен çын пулман.

Революци хыççăн Шуркасси йăлĕ те Совет Союзĕнчи ытти йăлсем пекех тĕнчерех улшăнчĕ. Халĕ йăлта пуçламăш шкул, клуб ӳт. 1930 çулта колхоз организацилесен чухăнна вăтам хресченсем пурте колхоза кĕчĕç. Колхозра çуленех пысăк тухăçлă тырпул туса илсе, колхозниксем пуйăн та куļтурлă пурăнаканни пулчĕç.

Колхоз пуçланнăранпа йăлта 12 çын çĕнĕ пурт лартрĕç. 10 çын çĕнĕ машинĕ, чăнĕсем велосипедсем туйăнчĕç. Колхозниксем праçниксенче пурте коçтумсем, пурçăн, саттин кĕпесем, ăтă-пушмаксем тăхăнса çӳреççĕ.

1937 çултанпа колхозниксен çурчĕсенче Ильич лампи çутатăр, радио янтрăр. Халĕ ĕнтĕ йăлта хутла пĕлмен çын пачах та çук. Киле́пренех хăçат-журнал çырăнса илеççĕ.

Шуркасси пĕчĕк йăл пулсан та кунта интеллигентсем нумай. Аслă шкул пĕтерни 2 çын, вăтам пĕлӳ нăни 13, халĕ 10 çамрăк вăтам шкулсенче вĕренеççĕ. Вырăнсенче ĕçлекенсем те чылай.

Кусемсĕр пуçне, шут ĕçĕнче ĕçлекенсем, суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекенсем, радиссем, электромонторсем тата ытти те чылай. Тимков Павелпа Алексеевăн Ивăн Хĕрлĕ Çарта командир пулса ĕçлеççĕ.

Шуркасси çамрăкĕсем пушă вăхăта куļтурлă иртереççĕ. Клубра спектаклĕсем, вечĕрсем иртереççĕ, кинокартинăсем кураççĕ.

Телейлĕ колхозниксем савăнăçлă пурнăç туса панишăн Сталин йăлташа тав тăвăççĕ.

Н. А.

Кĕçĕн-Çĕрпӳ улшăнса çĕнелчĕ

Елĕкхи вăхăтра Кĕçĕн-Çĕрпӳ (Патăрьел р.) питĕ чухăн тата тĕттĕм йăл пулнă. Хресченсем пусмăрта, тĕттĕмлĕхре чухăн пурăçна пурăннă. Лайăх пурăнăç пуянсемпе кулаксемшĕн кăна пулнă.

Совет власĕ вăхăтĕнче Кĕçĕн-Çĕрпӳ йăлĕ йăлтах улшăнса, колхозăн çĕнĕ йăл пулса тăчĕ. Елĕкхи вăхăтра тĕн сĕрĕмĕ сарса ларакан чиркӳ вырăнне хăй пысăк та илемлĕ клуб çутăлса ларать. Чан сассипе вырăнне колхозăн автомашинĕпе двигателĕн сассисем чĕрене çĕклентереççĕ.

Йăлта хăй тулăнмар вăтам шкул, библиотекă, ача йăçăн пур. Çавăн пекех, хăй ĕнтĕ Кĕçĕн-Çĕрпӳ йăлĕн хăйĕн интеллигенци ӳссе пырать. 15 колхозник трактăрис пулса ĕçлет. А. Козловă йăлташ йăлсовет председательĕ, И. Соколовă вулăн çурт пуçлăхĕ, Т. Молоковă колхоз сумĕнчи комсомол пуçламăш организацин секретарĕ, М. Шкоļникăвă трахсестра, Т. Васильĕвă колхоз ферми пуçлăхĕ пулса ĕçлеççĕ.

Колхоз та вăйланса пырать. Колхозниксем тĕрĕ ĕçлесе кашни çул вăйлă тырпул туса илеççĕ, пуйăн та куļтурлă пурнăç çулĕ çине çирĕппĕнех тăчĕç.

И. Чернов.

Квартăл планне срукчен тултарнăр

Кивĕ Шелттем (Канаш р.) йăлсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз страховани укçине тупăш тăрăх илекен налога пĕтĕмпех тӳлесе татрĕ. Колхозниксем страхованипе йăлхуçалăх налог укçине 82 процент тӳлесе. Займ укçине тахçанах тӳлесе татнă, облигацисене алла илнĕ. „Майăн 1-мĕш" колхоз тата кунти колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

Çав вăхăтрах Кивĕ Шелттемри Сталин ячĕпе тăракан колхоз укçа-тенкĕ пухăс ĕçре йăлса пырать. Колхоз председательĕ Кротăв 1937 çулăн йăлхуçалăх налогне 26 тенкĕ ытла, страхованине 27 тенкĕ те 57 пус. куļтсбор укçине 21 тенкĕ ытла тӳлемен. Кăçалхищĕн те займпа страхованин укçисене пĕр пус та тӳлемен. Колхоз тупăш тăрăх илекен налог укçи 1.315 тенкĕ, страхованин 900 тенкĕ тӳлесе татман.

Руководительсем çавăн пек хăтланнăн ĕçре питĕ кансĕрлет. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозниксем патне тĕрлĕ тӳлемсем пухма пыратăп та, хăшĕ-пĕрисем мана тӳрех: „колхоз председательĕ Кротăв тӳлесе таттăр-ха, вара епĕр те тӳлесе тататпăр",—тесçĕ. Колхозăпе илсен займа 1.300 тенкĕлĕх çыранна, укçине 100 тенкĕ ачах пухнă. Çавăн пекех „Ăнатуй" колхозра та укçа-тенкĕ пухасси начар пырать. Çак икĕ колхозăн руководительсем укçа-тенкĕ пухассине хакламанни вăл йăлсоветне çак ĕçре кайăла туртса пырать.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре начар ĕçлеме нимĕнле сăлтав та çук. Йăлсовет финанс активĕ тата колхозсемпе йăлсовет руководительĕсем çак ĕçе тивĕçлине хутшăса ĕçлесен тăваттăмĕш квартăлти финанс планне срукченех тултарма пултаратпăр.

Налог агенчĕ

С. Леонтйĕв.

Ытлашши тырăна—государствăна

Кăпас йăлсоветне кĕрекен колхозсем (Тутăркас р.) хăйсенчен ытлашши тырăна государствăна сутаççĕ. Çак кунсенче „КИМ" колхоз 408 пăт, „Комбайн" колхоз 504 пăт, „Кăпас" колхоз 222 пăт, пĕтĕмпе 1.113 пăт тырă сутрĕç.

Колхозниксем те хăйсенчен ытлашши тырра государствăна сутаççĕ. „Кăпас" колхоз членĕсенчен Сорокин йăлташ 15 пăт, Чернов йăлташ 12 пăт, Аргавдейĕв йăлташ 9 пăт тата ытти йăлташсем те сахал мар тырă сутрĕç.

Колхозсем тырă сутнăшăн кооперативăн йăлхуçалăх машинăсем, шина, пăтасем т. ыт. таварсем те илеççĕ.

С. Савелйĕв.

Сутăн илнĕ тырра склада леçеççĕ

УЛАТАР. Государствăна тырă сутас ĕç кашни кунах вăйланса пырать. Нойабĕрĕн 27-мĕшне йăлпосем районĕпе 1987 центнĕр тырă сутăн илме колхозсемпе договăрсем тунă. Пайăнки куна йăлпосем сутăн илнĕ тырăран 175 центнĕрне тырă складне кайса леçрĕç.

Тырă сутас ĕç районра чи малтан Засурско-Безднинский йăлсоветĕнчи „Красная Мордовия" колхозра пуçланчĕ. Колхозниксем аслă пуху туса иртернĕ хыççăн колхоз 3 тонна тырă сутма йышăнчĕ.Кунсăр пуçне колхозниксем пĕр пĕринпе социализăма ăмăртса 990 килограм тырă сутрĕç.

** ВĂРНАР. Пур колхозсенче те хăйсенчен ытлашши тырра государствăна сутаççĕ. Çак кунсенче Чăрăшкас Мăратри „11 лет Чувашии" колхоз 68 центнĕр, Хăпас колхозĕ 100 центнĕр тырă сутрĕç.

Тырă сутнăшăн Чăрăшкас Мăрат колхозĕ молотилкă илме йăлмана зайавкă панĕ.

Н. Козлов.

Инвалидсен промысла кооперацийĕ

Капитализăмлă çĕршывсенче инвалид йăрăхсăр тухнă çын шутланса тăрат. Инвалидсĕне капиталиссем киралĕ мар йăпала вырăнне шутласа пуçне ĕçрен те хăваласа калараççĕ.

Пирĕн Совет Союзĕнче начах урăхла. ССР Союзĕнче кашни ĕçсăмпи общăстăвăн пĕртан правалă чиновникĕ. Пирĕн государствăра пĕтĕм ĕçсăмписен пурнăçне дайăхатассишĕн пысăкăн тăрăшат.

Власа хамăр алла илнĕ хыççăнах Совет власĕ вăрçăра тата ĕçре аманнисене пысăк пулăшу пама пуçларĕ. Социалăла пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм Халăх Комиссариачĕ туна.

Совет власĕ инвалидсене пурнăç ĕнчен пулăшас тĕлĕшпе кăна мар, сывлăха сыватса вĕсене кадлех ĕçе тавăрăнмала тăвассишĕн тăрăшат. Правительствă 1921 ç. декабрĕрĕн 8-че каларăнă декрет тăрăх РСФС Республикинче инвалидсен кооперацин системине организацинленĕ. Инвалидсен кооперацийĕ хăйĕн умне инвалидсен пурнăçна йăлла условине лайăхлатас, вĕсене социалисăм стронтĕлствине хутшăнтарас задачăна дартат.

Боļшевиксен-партийĕ, унăн сулпуçĕ Сталин йăлташ йĕртсе пынипе инвалидсен кооперацийĕ, тĕрĕлĕн çăмăллăхсемпе усă курса, хăйĕн ĕçне сулсерен вăйлатса, лайăхлатаса пырат.

Чăваш республикинчи инвалидсен кооперацийĕ 22 производствăлă тата сутулăм ертелĕсене пĕрлештерес тăрат. Вăл ертелесене вăрçăра тата ĕçре инвалида тухнисене пĕтĕмпе 1050 сынна пĕрлештернĕ. Инвалидсен ертелĕсем туса калакан продукци хисепĕ тата сутулăм ӳссех пырат. Халăхăн вăхăтра инвалидсен ертелĕсен нумай тĕрлĕ производствăсем пур.

1938 çулта инвалидсен ертелĕсем 15.035 пин тенкĕлĕх продукци калараççĕ. Кунтне сулхинчен 14,1 процент ытларах. Тавар пахалăхне лайăхлатас йĕнĕне те ĕçлесем тунă. Инвалидсен кооперацийĕ ĕçсăмписем кулĕн кирлĕ таварсем 1990 пин тенкĕлĕх парат.

Кăçал çĕнĕ производствăсем уçма тата кивиннине лайăхлатса пысăлратма 287 пин тенкĕ уйăрнă. Çак укçа-тенкĕпе Канашри ертелете ĕçлекенсем валăри общежитири тунă. Халăхи вăхăтра Канашра. Çĕмĕрлере производствăлă сурчĕсене тăваççĕ. „Красный молот" ертел правленийĕ хăйĕн сутне пысăлатат. Çĕмĕрлере нумайăх та пулмасть кусĕкĕсемсем тăвакан производствă уçнă. Шупашкарти „Красный молот" ертел йолкăна илемлетмели тата ача-пăчасене выļамали йапаласем тума тытăнмала. Кунтах килес султа йăвăрран пробкă тума пуçăнмала.

Йăлашки çулсенче республикăри инвалидсен кооперацинсенче çĕнĕ кадресем, социалисмăла общăстăвăн чи лайăх çынниесем—стахановецсем, удăрниксем ӳссе çитĕнчĕç. „Союз инвалидов" ертелти стодаж М. Ф. Кисеļов йăлташ пирĕнпе йăлапах 200 процент ытла тултарса ĕçлет, общăстăвăла ĕçсене те активлăн хутшăнат. Сĕнтĕрвăрри ертелене çамăлă йăвалакан Д. И. Петров (вăл вăсăр) кашни кунах икшер норма тултарат. Вăл ертелти комсомол организацийĕпе. Çĕмĕрлĕ районĕнче калпаксăртуç çĕлекен П. П. Плаксин йăлташ панă планă 200 процент тултарса пырат. Çакăн пек стахановецсем ыттри ертелесене те сахал мар. вĕсен хисепне кунран кунах хутшăнса пырат.

Инвалидсен куļтури тата политикăлă пĕлĕшĕ ӳсрĕ. Вĕсен пурнăçна йăла условисем те лайăхланă. 1938 çулта канмалли сурчĕсене — 39 сыр. санаторийсене — 36 сыр. курортсенче — 17 сыр пулна.

Анчах инвалидсен кооперацин пур ĕнĕпе те анăçлăн ĕçлет теме сук. Ертелесенче, савăн пекех Чăвашкооперацийăвра та пысăк çитменлĕхсем. йăнăшсем пур. Планировани, техникăпа производствăна йĕнĕпе тата производствă, суту-илӳ, финанс ĕçĕсене организацилес тĕлĕшпе сăтăрсăсем чылай сийĕн тунă. Сăтăрсăсен йăлашкисене пĕтересси йăпах пырат-ха. Политикăлă-массăлă ĕçе йăпах туса пынă пирки, ертелесене членсен йышне ӳсмест. хăшĕпĕр-çĕрте чакни палăрат. План та тулса пымаст.

Производствăна планне анăçлăн пурнăçлассăна пыманни уйрăмăнах ертелесене ĕç дисциплинăн йăшăххинчен. чĕр тавăр-çитмен пирки простойсем пулнинчен килет. Ку çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ертелесен тата Коопинсойăуз руководительĕсем боļшевикла тимлĕхпе ĕçлемеççĕ-ха.

Финанс дисциплинине пăсни, банк панă кредитăна усă курманни, растратчиксемне, государствăпа пурлăхне çаратакансемне йăпах кĕрешĕнни ертелесене сахал мар пулна. Савна пула ертелесене, Коопинсойăуза укçа-тенкĕ ĕнченех йăвăрлăх пырса лекет. Растратăсем 90 пин тенкĕ шутланаççĕ. Судпа следстви органĕсем растратчиксенчен укçа шыраса илессине ĕçе нитĕ вăраха тăсса пыраççĕ. Ака „Чебторгин"-та ĕçленĕ Даннăвăн ĕçне Шупашкар хулăна милицин уйрăмĕ нитĕ султална выртарат. Канаш ертелĕнче 3000 тенкĕ растрата тунă Самсонăвăн ĕçĕ 1936 çултанпа выртат т. ыт. те. Кусем пирки Коопинсойăуз районсенчи тата республикăри прокурорсене пĕрре кăна мар аса илтернĕ.

Инвалидсен кооперацине анăçлăн ĕçлекен тума партин тата советăн вырăнти организацисем пулăшăн киралĕ.

Çулталăкăн йăлашки уйăхне кĕтĕмăр. Çак уйăхри ĕçсем çулталăкри плана тултарассине тата параççĕ. Сăтăрсăсен йăлашкисене пĕтерес, стахановăла йухăма анăлăн çарса йăрса инвалидсен кооперацин çулталăкри производствăпа планне анăçлăн тултармала тăвар.

П. ВАÇИļЬКОВ.

Промышлĕннăçăн ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче

Промышлĕннăçăн Шупашкарти ăслăлăхпа тĕпчев институт руководствине дарăл халăх тăшманĕсем пур майсемпе те институт ĕçĕсене аркатса пама тăрăшнă. Халăх тăшманĕсем тӳрĕ ĕçлекенсене хĕстерĕç, вĕсен ĕçĕсене аркатса пынă.

Тăшмансене тăра пăх çине кăларса сĕмĕрсе тăкнă хыççăн, вĕсем туса хăварнă сăтăрăлăх пĕтерсе пынă пĕтĕм ĕçе лайăхлатма май пачĕ. Буровой мăстăр С. К. Куçмин йăлташ рационализацийĕ сĕнӳпе усă курни ĕç тухăçăлăхне 500—700 процент таран ӳстерчĕ. Савна май рабочисем кашни 8 сехет хушшине 40 тенкĕлĕк ĕçлесе илме пултараççĕ.

Тăвайри тĕпчев ушкăнĕн коллективĕ ĕç планĕпе 400 процент таран тултарса пырат. Вăрманкăри тĕпчев партийĕ те лайăх ĕçлет. Вăл вĕçĕпер норма тултарат. Институтри Батийенко (стройматериалсен пайĕ), Дрезина (химин пайĕ) тата тепловăз Адрийанăн йăлташсем Вăрманкăри кирпĕч савăт строительсăн вăлăн техникăла материалсене срукра хатĕрлесе пама пулăшрĕç.

ДМИТРИЙЕВ.

Канашри вакунсем йăсакан савăтра

Канашри вакунсем йăсакан савăтри клуб сумĕнче художествăлă пултăруллăх кружокĕсем чылайăн ĕçлеççĕ. Ку савăтра чылай пионерсем ĕçлеççĕ, кашни пионерăн хăйĕн кружокĕсем пур. Акă, вырăссен драмкружокне Галич-Прозорова йăлташ йĕртсе пырат. Чăвашсен драмкружокне Маркăвă, тутарсен драмкружокне Мустафин йăлташсем йĕртсе пыраççĕ. Кăçал драмкружоккем; „Йалта", „Очиан ставка" пĕесăсем дартнă. Сталинла Конституци кунĕнче „Маску долой" пĕесăна дартма хатĕрленеççĕ. Декабрĕрĕн 12-мĕшĕнче савăтра Нечайĕв йăлташ йĕртсе пыракан хор кружокĕ аван ĕçлесе пырат. Кружокра 50 рабочи тăрат. Ку кружок чукунçуа çинче ĕçлекенсен художествăлăлă пултăруллăх кружокĕсен одимпиадинче малти вырăна тухнă. Тата савăтра Минейĕв йĕртсе пыракан духовой оркестр, изо-кружокĕ, физкуļтурăпа, литературă кружокĕсем аван ĕçлесе пыраççĕ.

Н. АМУРЦЕВ.

Карл Маркс урамĕнче 24 хваттерлĕ çĕнĕ çурт тăваççĕ (Шупашкар). ӲКЕРЧĔК ÇИНЧĔ: И. Крайновпа Т. Сергейева каменщиксем стена купалаççĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Рак чирне хирёç кёрешмели ерне иртнё

Нойабёрён 23-чен пуçласа 30-не ситиччен ССР Сойузёнче рак чирне хирёç кёрешеви ерне пуçа иртнё.

Вăл ернене пётём тёнчери рак чирне хирёç кёрешес йенёне ёçлекен Лига Кунисем (ерăмёне упăшки) радий тупăранпа 40 çул тата Рентген икс суттине тупăранпа 43 çул тултарнине палла тăвас майпа организацилеме.

Çав ерне Совет çёршывёнче сывлăха сыхлас йенёне тунă ситёнçеви смотрё пуçа тачё. „Ерне" вăхăтёнче хулаçемне тата пысăк поçоларсенче пурнче те профилактикă, рак чирё çинчен лекцисемпе ăçлăлăх конференцийёсем туçа иртернё. Çавăн пекех „ерне" вăхăтёнче диспансёреемпе амбулаторисене çурекенсен йышё нумай ўснё. Вăл лекцисенче ёççынниксем Совет çёршывёнче сывлăха сыхлав ёçё мёне пуçа пынине, медицина практикин тата физикă теорин ыйтăвёсемпе тёплён паллашнă. Чылай республикасенче çёнёрен онкологи пункчёсене уçнă, пуçницасенче рак чирне чирленё сынсене выртарма койкасем уйăрнă, çёнё оборудованисем кўрçе кнанё.

Республикасенче, крайсенче, облăçсенче пурнче те рак чирне хирёç кёрешес йенёне ёçлекен комитетсем тунă.

(ТАСС).

Районсенчи вăрлăх хуçалăхёсен малтанхи утăмёсем

ССРС Халăх Комиссарёсен Совечё йышăннă решени тăрăх, Сойузра районсенчи вăрлăх хуçалăхёсене нумай организацилеме. Хадхи вăхăтра вёсем—1.632. Çак хуçалăхсен задачи—колхозсемпе совхозсен вăрлăх участникесен вăлăн суйласа илнё пысăк пахалăхлă суртăл вăрлăхсем пырса тăрасси.

Вăрлăх хуçалăхёсем нёрпеме çул ёçлени çакна кăтартса пачё: вёсем тёп тырă культурисен вăрлăх сурчёсене çёмтме çеç мар тата таврари колхозсене уйăхра ёçне культурăлă йёркеллесе йама та пулăшаççё.

Сейтлерск районёнчи вăрлăх хуçалăхёнче („Третья пятилетка" колхоз, Крым АССР) уй-хирне пăхас ёçе пит лайăх йёркеллесе йанă. Çак хуçалăх вăтам шутпа кашни гектартан 18 центнёр тёштăра туса илнё. Сурçёр - Осетин АСС Республикёнче районсенчи вăрлăх хуçалăхёсем гектартан 20—24 центнёр тăрăн тёштăра туса илнё, вăл хуçалăх таврашёнчи колхозсенче гектартан 12 — 14 центнёр тăрăн туса илнё.

(ТАСС).

Риббентроп Париже пырат

ПАРИЖ, декабёрён 2-мёш. Германин йўт çёршыв ёçёсен министрё Риббентроп Париже декабёрён 6-мёшёнче пырат. Унта вăл декабёрён 8-мёнчен пуçлă. Декабёрён 8-мёшёнче Риббентроп кайăла Германине туçса кайат.

Подъ Низан „Се суар" хаçатра: Франшине Германи хушшинчи декларани çинче алă пуснине Франци правительстви „Рим—Берлин тёнёлё" текен блока çирёплетет. Çакна вăл тăтали Франшине хирёçле политикă тытăç вăхăтра тăват, тесе палăртат.

(ТАСС).

Чăвашдревпромсойуз уполномоченнăйёсен пухăвё

Декабрёрён 2-мёшёнче Чăвашдревпромсойуз çиçтемине кёрекен промысла кооперацин ертел уполномочённăйёсен республикăри пёрремёш пухăвё уçăлчё. Пухăва стахановецсемпе ударниксем, ертел правлени председателёсем 130 çын пыта пуханнă.

Пухăн йёркинчи пёрремёш ыйту тăрăх—10 уйăхри ёçсем çинчен Чăвашдревпромсойузён Оргбўро председателё Хохлов йулташ доклад туса ячё.

Чăвашдревпромсойуз çиçтемин ытти çулхисемпе танлаштарсан чылай улăшнусем тунă курăнат. Çиçтемăна кёрекен ертелсем, тавар туса кăларассине кăна мар, тата чăнсен йышне ўстерессине ўсёмсем тунă. Нойабёрён 1-мёшне çиçтемăри 79 ертелсем 18.445 çынна пёрлештерсе тăраççё. Кăçалхи çул вёсен ретне çёнёрен 1.103 çын члена кёрё. 27 ертеле механизацилеме т. ыт. те.

Анчах ку тёслёхсем пур ертелсем те лайăх ёçленине пётермеççё-ха. Тума пилăртнă ёçсенчен пайăнки куна чылайёшё пурнăçа кёрсе пымасть. Уйрăмăнах çиçтемă тавар хакне йўнетессине, травматисăма чăкăрассине, пай укçи пухассине йăнăх ёçлесе пырат. Промфинплана пётёмёшпе илсен 84,1 процент ёçе тултарнă. Уйрăм ассортиментсем тăрăх илсен татах та çитёлёксёр ёçлесе пынă курăнат. Акă культурăлă-художествăлă йăпăлласем туса кăларас йенёне плана 22 процент, ёççынниссене культен кирлё таварсем кăларас йенёне 44,3 процент кăна пурнăçланă.

ПСК(б)П Чăваш Обкомён тата Чăваш АССР Халăх Комиссарёсен Совечён кинё, ташă анла руководстви ертелсем ёçне аркатса пырассишен тăрăшнă. Ертелсене чёр таварсем, материалсем çителёклё тараттассине, механизăмсем çине ёçлеме куçарассине организацилемен. Хăлăх тăшманёсен сăтăрăхё йулашкийёсене пётерес тёлёшне ертел тата социуз руководителёсем тивёслён ёçлемеççё-ха. Çавна кăтартса параççё фактсем. Пётём çиçтеман кăçалхипе иртнё çулхи убытки 488 пин тенкё шутланнат.

Социализмăлă ăмăртуна стахановла йухăм йанăх сарăлса пырат. Пайăнки куна ăмăртăва пётёмпе те 3.226 çынна çеç йăвăçтарнă, 45 ертел ăмăртăва тухнă. Стахановёцсен хисепё йерипен ўсет. Çавна пула ёнтё чылай ертелсем вунă уйăхри плана тултарман.

Промышленнăçпа финанс планне йăнăçлăн тултарса, ёç тухăçлăхне йалан хăпартса пынă май тавар пахалăхне лайăхлатса ёçлекен ертелсем, стахановёцсем çук мар. Улхашăр вăрман ертелё 10 уйăхри плана 144 процент, Йёпреçри промысла ертелё 111 процент тултарнă. Чи лайăх стахановёцсем Вăлăк (Йёпреç), Тимофейёв (Новинск), Коротков (Вăтам Пукаш), Артемьёв (Чарпуçё) йулташсем кулленăн нормăна 180—250 процент тултарса ёçлеççё. Акă Коротков йулташ çулталăкне 4 пин штук чăпта çапма хăй çине илнё обязательствăна нойабёрён малтанхи кунёсенчех тултарнă. Анчах правлени руководителёсем малта пыракан стахановёцсен паха примерёсене сарассине йăнăх ёçлеççё. Чылай ертелсене массăлă-политикăлă ёç чарăнса ларнăпа пёрех.

Пур кăтартусем тăрăх та плана тултарса ёçлеме майсем пур. Çиçтемă, çавăн пекех ертел руководителёсен çак кёске вăхăтрах сăтăрăсен йулашкийёсене пётерсе кăçалхи çулăн промфинплане йăнăçлăн тултармăла тăвас пулат.

Художествăлă пултарулăх кружокёсем— Сталинла Конституци кунё тёлне

** Çёмёрле комбиначё çумёнчи художествăлă пултарулăх кружокёсем Сталинла Конституци кунне щисăх хăваласлăхпа уйăвлама хатёрленеççё. Драмкружок Корнейчукăн „Платон Кречет" йăтлă пёсине хатёрлет.

Рабочисемпе килхуçи хёрарăмёсенчен тăракан хора çамрăк композитăр Леобёдёв йулташ йертсе пырат. Хор совет композитăрёсем çырнă çёнё массăлă йурăсене вёренет. Тёслёхрен: „Песня о Сталине" — музыкё Покрассен, „Казачья песня"—музыкё Шишовăн. „Сталинский закон" тата ыт. те.

Чи ваван саслăлă солистсем: Злодеёв (стольярăлă цехри бухгалтёр), Корольов (стольярăлă цехри стахановец), Корнусенко, Лебедёв, Уварова тата ыт. те тёрлёрен кинофильмсенчи çёнё йурăсене вёренет, тёслёхрен: „Песня о Сталине" — музыкё Покрассен, „Казачья песня"—музыкё Шишовăн. „Сталинский закон" тата ыт. те.

** Акулеевăри (Шупашкар р.) „Серп и молот" колхоз çумёнчи хор кружокё 1937 çулта организациленнё. Хора 57 çулхи колхозник Петр Куприянăн йертсе пырат. 1937—38 çулсем хушшинче хорăн йышё тата художествăлă пултарулăхё те чылай ўсрё. Халё хорта 28 колхозник тарат. Хорăн репертуарёнче вырăс композитăрёсемпе чăваш композитăрёсем çырнă йурăсем тата Совет Союзёнчи халăхсен йурринсем. Мён пурё 60 йурă ытла вёреннё. Çапла вара Акулеёвăри колхоз хорё районёне пёрремёш вырăн йышăнса тарат. Ана колхоз правлени те аван пулăшса пырат.

Халё Сталинла Конституцине йышăннин икё çул çитнё май хор çёнёрен чăвашла тата вырăсла йурăсем вёренет. Репертуарта: „Чи кёрё" тата „Хёвелёмёр Сталин" (музыкё Лисковăн), „Йурă" (музыкё Воробйовăн). „Если завтра война" (музыкё Покрассен). „От края и до края" (Дзержинскин) тата ыт. те.

Ф. Л-в.

** Йёлчёк. Патрекел йăлёнчи шкул ачисем-комсомолёцсем Сталинла Конституци кунне пысăк хăваласлăхпа кётёççё. Çак кун шкула вёренекенсем колхозникесене спектакль выляса кăтартăççё. Хăлăхсен çулпуçё Сталин йулташ çинчен, телейлё те савăнăçлă пурнăç çинчен çырнă йурăсене йурласа парăççё. Вёренекенсем уйăва вёренёрге йăлăх паллăсемпе кётсе илеççё.

А. Палашкин.

Чăваш АСС Республикёнче 4-мёш квартăлта укçа-тенкё пухас плана мёнле тултарса пынине кăтартни

(Декабрёрён 1-мёшне, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Улатăр	53,4
Елёк	47,0
Патăрйел	36,8
Вăрнар	51,2
Йёпреç	30,0
Ишлей	41,0
Канаш	36,8
Кусалавкка	47,0
Хёрлё Чутай	47,7
Кувакино	51,8
Сёнтёрвăрри	46,1
Пăрачкав	46,9
Турхан	42,2
Тутăркас	43,9
Трак	45,7
Вăрнар	35,3
Сёрнё	43,6
Шупашкар	53,1
Шăмăршă	51,3
Шăхасан	45,8
Шăнкăртав	63,2
Сёмёрле	35,2
Йетёрне	51,7
Йёлчёк	44,9
Тăвай	45,1
Улатăр хули	52,4
Канаш хули	62,3
Шупашкар хули	53,4

Республикёпе 46,0

Спорт хыпарёсем

** Нойабёрён 2-мёшёнче Чăваш республикёнчи „Темп" общчёствин чи лайăх гимнасчёсем—Александр Шашкова Анна Карымова „Темп" общчёствин Пётём Сойузри гимнастикăлă ăмăртăвёнче пулма Киёв хулинне тухса кайнă. Сталинла Конституци кунё йăчёне пулса иртекен ăмăрту вичё кун хушши—декабрёрён 6-мёшёнчен пуçласа 9-мёшчен пырат.

** Декабрёрён 16-мёшёнчен пуçласа 20-мёшчен Ленинградра „Темп" спорт общчёствин Пётём Сойузри мăлти вырăна тухассине шахмат-шашкă ăмăртăвё пулса иртет. Чăваш республикёнчи „Темп" общчёствинчен вăл ăмăртура шахматист Никитин тата шашист Иванов йулташсем пулаççё. Халь вёсем çёршывăн пиллă шахматисёсемпе шашисёсем хутшăнакан ăмăртăва никенсёсем хатёрленеççё.

** „Темп" спорт общчёстви хёллехи спорт сезонне кётсе илме вăйăлăн хатёрленет. Халё виçё хоккей команди (арçынсен, хёрарăмсен тата ачасен) организацилеме. Вёсем строительсен клубёнчи спорт залёнче тăшăлах хатёрленеççё. Иртнё çул „Темп" общчёствин пёр хоккей команди çеç пулнă.

Çёнё шкулсем

Чăваш республикёнче çёнёрен тăваклă шкулсем шучё кашни çулах ўссе пырат.

Кăçал 1937 çуати планна туса пётерейёмён 16 шкула туса пётереççё. Кунсăр пуçне 1938 çуати планпа йалта 16 шкул, хулара 2 шкул тата Канашри педучилищăна туса пётереççё.

Хулари шкулсене тума 1 мёлйун та 342 пин тенкё, йалти шкулсене тума 2 мёлйун та 700 пин. Канашри педучилищăна çуртне тума 85 пин тенкё укçа уйăрса панă.

В. ПОРФИРИЁВ.

КОГИЗ Бибколлектăрёнчен кёнекесем илсе тăракан хулаçемпе районсенчи библиотекăсене тата шкулсене пёлсе тăма

КОГИЗ-ăн Чăваш республикăнчи уйрăмён Бибколлектăрё уктан кёнекесем илсе тăракан библиотекăсемпе шкулсене 1939 çулшăн журналсене Бибколлектăр урлă çырăнса илме чёнет.

Бибколлектăр консультаци тата библиотекăра ёçлеме кирлё журналсен содержанине тăрăх обзор парат.

Çырăнса илме васкăр.

Ыйтусемпе заказсене çак адрёспе йăрăр: Чёбоксары, Ленинградская ул., № 5, Бибколлектор КОГИЗа.

ШОСГИДРОТЕХСТРОЙ

Сойуз Тăп Комитечён профдвижени шкулё Шупашкарта вырçё пуçлёнё

ВЁРЕНУ ХВАТЕРЁ ТАРА ИЛЕТ

Çак адрёсе ыйтса пёлмеле: г. Чебоксары, ул. Пластавова, 27, телефон—кăнтăрла 3—45, кăçхине 4—27.

Дирекци.

ШУПАШКАРТИ КООПЕРАТИВ ТЕХНИКУМНЕ нимёç чёлхипе вёрентекен ПРЕПОДАВАТЁЛ ВАСКАВЛА КИРЛЕ.

Ёçукçи—илёмлё ўрăх.

Районран килекенсене КЗОТ 83-мёш статйи тăрăх çул укçи тўлеççё.

Дирекци.

3—2

КУЙБЫШЁВРИ гидроузёл строитёлствин

çурçёр хёвелăнçёнчи инженерлă-геологилё уйрăмё 17, 18, 19-мёш топографилё партинче ёçленё çёртен ёççын тата виççёмёш инлёççулăхăн (пёрремёш çулхи кăларăмăн) йёмён облигацинене илмессер кайнă рабочисене пурнче те ёççын тата облигацинене илма çак адрёсе бухгалтерине нына ыйтат: г Чебоксары, улица Кадыкова, дом № 6/а.

Нына чухне ёçрен тухни çинчен паспорткăна илсе нымала.

Медработниксене, пуçницасене, поликлиникăсене тата районсенчи сывлăха сыхлах пайёсене **ПУРНЕ ТЕ**

КОГИЗ-ăн ШУПАШКАРТИ, УЛАТĂРТИ, КАНАШРИ, ПАТĂРЙЕЛЁНЧИ, СЁМЁРЛЕРИ, СЁРПУРИ, ИЁТЁРНЕРИ, СЁНТЁРВĂРРИНЧИ тата КУСЛАВККАРИ магазинсенче

1939 ÇУЛШĂН

медицина журналёсене çырăнса илёр.

Позписăна кăвăрт парсан журналсем вăхăтра пыраççё.

Журналсене КОГИЗ-ăн Тёп подписка експедицийё ăарса тарат.

Журналсен списокне 1938 çуати кайăкёрён 17-мёшёнче тухнă „Мед. работник" журналта пичетленё.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикёнчи уйрăмё.

Мёнпур колхозниксене, колхозсене, рабочисемпе служăшчисене, клубсене, вулав çурчёсене, радиоузёлсене тата спорт организацисене пёлсе тăма

Чăвашсойузён Канаш хулинчи куçтурă таварёсен бази çакăн пек таварсем мён чухлё кирлё тараи сутат:

1) Электрофонсем—штукё 180 тенкё;
2) Домрă оркестрё—комплект 1120 тенкё, комплектра тăвата струнлă домрăсем 13 штук;
3) Проекцилё хунарсем—штукё 90 тенкё;
4) Балалайкăсем;
5) Мандолинăсем—штукё 50 тенкёрен пуçласа 100 тенке çитиччен;
6) Йолка капăрлатмалисем;
7) Çулпуçсен бўтсем;
8) Анодлă батарей—45 волт,
9) Анодлă батарей (шыв тултармали)—50 волт;
10) Элементсем—1,35—500;
11) Радиолампăсем (тёрлёренех);
12) Пысăк билиардсем—штукё 700 тенкё, шăмăран тунă шарсем;
13) Биллиардсем—штукё 125 тенкё;
14) Йёлтёрсем—тёслёрен суртлă;
15) Коньисем—тёслёрен суртлă;
16) Хёвелтухăç полушарни физикăлă карттисем,
17) Хёвелăнăç полушарни физикăлă карттисем;
18) Европăн физикăлă картти;
19) Азии физикăлă картти;
20) Кантăр Америкăн физикăлă картти;
21) Австрални физикăлă картти;
22) ССР Сойузён политикăлă картти;
23) Йалхуçалăх тата ача-пăча литературисем (чăвашла).

Мёнпур районсенчи куçтмагсенчен, йалти магазинсенчен тата йалпосенчен ыйтăр.

ДИРЕКЦИ.

3—1.

Хурăнвар

Хурăнвар—авалтанах паллă йăл пулнă. Ёлёк, революцичченех, ку йăлати сутăçсемне кулаксем тасти-тăсти йăлсенчен тарçă пухнă. Чухăнсем сёлёк пек йун ёçекенсен пусмăрёнче тўсеймесёр çемйи-çемйинех çурт хупса туса кайнă та таврари йăлсенче татăк çăкăршăн кёденсе, шăкталаса çўренё. Кулаксен пусмăрёнче ураран-урана улăштарăлми ывăнса ёçлесен те тăранниччен апат çийеймен чухăнсем. Кусран куççуль татмасăр йёрсе çўрекен тăлăх ачасем те шутсăрах нумай пулнă йăлсенче. Хурăнварта çеç мар, патша Росçийён пур кётесёсенче те майсемчен йăвăр чулсем çакса йанă пек йăвăрран утнă чухăн çынсем, ирёккён сывлайман. Сар хёвел çутти те, çанталăк илемё те вёсене хаваслăх парайман.

Хурăнварти сутăçăсем таврари йăлсенче, пасарсенче таварсем сутнă, кулаксем çёршер çухрăм йăвакка кайса çёр тара илнё. Çапла сарăлнă Хурăнварăн „чаплă" йачё.

1895-мёш çул. Нушаланса пурăнакансене ку тёнчере асап чăтсан та „леш" тёнчере телейлё пулма хушакан турра ёненме, тамăк-çылăхран хăрама, куштана пăханса пурăнма вёрентекен тата хăйсене пуймашкăн питё те аван май пыракан чиркў лартма таврари йăлсенчен тырă пухаççё Хурăнварти кулаксем. Вёсем, патша правительствин шанчăклă хăйар йытти-семсем, хăйсем тăвас тенине тăваççё. Йалсенчен тырă тата укçа пухаканнисем мён чул услам курман-ши? Кун çинчен никам та тёрёссине калама пултарайманнисем, Анчах пур кулаксем те пёрлешсе чиркў лартнă вăхăтра çёрен-кунён ерех ёçиниех пит аван астăваççё-ха пайăнки вата сынсем.

Чиркўне пёрлех иккёмёш класăлă шкул та уçăлат. Шкул çулăнни кăçал 40 çул тултарчё. Камсем вёренне-ха ёлёк ку шкулта? Вёрентекенсём камсем пулнă? Тўрех калаймала, ку шкулта кулаксен, сутăçăсен, пуп таврашёсен ачисем çеç вёреннё. Йалта пысăк шкул уçăлни чухăнсен ачисене кёвёçтернё çеç, вёсене вёренме май пулман.

Кулаксем йалти чухăнсене çаратна. Кандрати—уделни çёр тытнă. Йал таврашёнчи чи лайăх çёрсене туртса илнё. Митрахван — йал старăсти пулса мёнпур чухăн-вăтама пăхăнтарнă. Вёсем мён тăвас тенё, çавна тунă. Улăм витнё хура та пёчёк çуртсен çумёнче вёсен çурчёсем кантур пек каранса ларнă.

Çапла пулнă ёлёкçи Хурăнвар. Çёр тёслё вырă-хурах çаратнă халăха, халăхран тăлпана. Темиçе ёмёр хушши хён-хур айёнче пурăннă халăха Октябер революцийё çеç пусмăртан тăтарчё. Ленин—Сталин партийё пёрентрёв кёрешме, Ёçхалăхё кёрешўре тупрё ёмёрсен ăмăртаççё вёсем.

1930 çулта Хурăнварта колхоз организацилеме. Кулаксем темле майпа та колхоза салатма тăрăшрёç, колхоз çинчен тёрёрен суйа сăмахсем сарчёç. Активиссем çине тапăнчёç, тем те хăтланчёç. Анчах кулаксен класне пётерсе хучёç. Колхозникесем пуйан та кулăтурăлă пурăнаççа пурăнаççё. Кивелсе тайăлнă пёчёк пўртсем вырăнне çак çич-сакăр çул хушшинче 50—60 çёнё те пысăк çуртсем сётел шăтса ларчёç. Чёречёсем çинче хёлён-çăвён чечеккем йешёрсе ўсеççё.

Акă, Сандийарăв Иван, тăлăх ўснёскер, асăнма та йăрушă пурăнçа пурăнатчё. Халё, колхоз пуçланнăранпа вăл çуллеех 200—300 пăт тырă ёçлесе илет. Колхозра хисеплё çын. Ёçне кура ăна колхоз çуллен парнесем парат. Пўрт лартса пачё ăна колхоз, ёнё те туйăнтарчё.

Колхозлă йалăн çамрăкёсенчен 49 учитёл, 3 агроном, 2 инженер, вăтам шкул пётермисенчен тата 10-шё Хёрлё Çар ретёнче, институтсемпе университет пётернисем—3, аслă шкулсенче вёренекенсем—8, вăтам шкулта тата техникумсенче вёренекенсен шучё 400 çынна çитет. Çаксемпе пёрлех комбайнерсем, трактăриссем, шофёрсем, артиссем те пур Хурăнвар çамрăкёсенчен.

Вăтă арçынсемпе хёрарăмсенчен те колхозра пысăк ёç тухăçлăхёсем кăтартакан стахановёцсемпе стахановăкăсен шучё çуллен ўссе пырат. Çамрăксемпе пёрле ёçре ăмăртаççё вёсем.

Йалта икё колхоз. Çирёплевеççё, вăйланаççё колхозсем. Çуллен тирпул тухăçё ўсет. Октябер революцийиччен пёччен хуçалăхсем туса илнийчен ик-виç хут ытларах тырă туса илеççё халё вёсем.

Йалта халь вăтам шкул, клуб, почтă уйрăмё, икё кооператив лавки. Йалсовечё, гараж, трахпункт т. ыт. те. Ўсет, сарăлат йал. Йал илемленет. Клуб кашни сунăн ăуратнă çурчё пулса тачё. Çамрăксемпе пёрле ваттисем те йышлăн çўреççё клуба. Йалта 24 учитёл, вёсем культурăлă-массăлă ёçе лайăх йёркеленё. Пурăнас, ёçлес килет Сталинла ёмёрте, хаваслă пурнăçра, Сталинла Конституци хёвелё айёнче.

Ёлёк, вырăссен аслă поечё Некрасăв:

Назови мне такую обитель,
Я такого угла не видал,
Где бы сеятель твой и хранитель,
Где бы русский народ не стонал,—

тесе асап тўсекен халăх çинчен хурланса йурланă пулсан, халё епёр пурте савăнсах:

Широка страна моя родная,
Много в ней лесов, полей и рек.
Я другой такой страны не знаю
Где так вольно дышит человек,—

тесе хамăр çинчен хаваслăн йăнтратса йурлатпăр.

Захар Иççан.

Хурăнвар, Тутар республикё.

ХАÇАТ-ЖУРНАЛСЕНЕ

1939 ÇУЛШĂН ÇЫРĂНТАРМА ПУÇЛАНĂ

Республикăра тухса тăракан хаçатсемпе журналсене мён чухлё кирлё тараи çырăнма пулат.

Хаçатсемпе журналсен йăвăсем	Мёнле чёлхепе тухнă	Çырăнса илмели хакё			
		1 уйăха	3 уйăха	6 уйăха	Çулталăка
Хаçатсем:					
„Красная Чувашия"	Вырăсла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Чăваш Коммунё"	Чăвашла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Çамрăк боçшевик"	„	60	1—80	3—60	7—20
„Пионер сасси"	Чăвашла тата вырăсла	25	75	1—50	3—00
„Стахановла хăвăртлăхшăн"	Чăвашла тата вырăсла	50	1—50	3—00	6—00
Журналсем:					
„Ленин çулёнче"	Чăвашла	50	1—50	3—00	6—00
„Ёçхёрăмёе"	„	50	1—50	3—00	6—00
„Сунтал"	„	1—00	3—00	6—00	12—00
„Капкăн"	„	40	1—20	2—40	4—80
„Хатёр пул"	„	30	90	1—80	3—60

ПОДПИСКĂНА сойузпичет, почтă, почтальёнсем, хаçат çырăнассине организацилекенсем, предприйатисенчи, учреждёнисенчи, МТС-сенчи, совхозсенчи тата колхозсенчи пичет çăкăнат ответлă сынсем илеççё.

Шупашкарта хаçатсемпе журналсене кашни уйăхăн 29-мёш числиччен, районсенче 27-мёш числаччен çырăнма пулат.

ПОДПИСКĂНА ÇАК АДРЁСПА ЙĂМАЛА: Город Чебоксары, ЧАССР, Дом связи, подписная контора „Союзпечать".

Сыхăну управленин „Сойузпичечё".

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 646. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпр ма ЧАССР., заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.